МИНИСТЕРСТВО НАУКИ И ВЫСШЕГО ОБРАЗОВАНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
СТЕРЛИТАМАКСКИЙ ФИЛИАЛ
ФЕДЕРАЛЬНОГО ГОСУДАРСТВЕННОГО БЮДЖЕТНОГО ОБРАЗОВАТЕЛЬНОГО
УЧРЕЖДЕНИЯ ВЫСШЕГО ОБРАЗОВАНИЯ
«УФИМСКИЙ УНИВЕРСИТЕТ НАУКИ И ТЕХНОЛОГИЙ»
(СФ УУНиТ)

# ПРОГРАММА

вступительных испытаний, проводимых вузом самостоятельно,
для поступающих на направление подготовки бакалавриата
44.03.05 Педагогическое образование (с двумя профилями подготовки),
программы: «Родной (чувашский) язык и литература, Иностранный язык»;
«Родной (чувашский) язык и литература, Русский язык»

**Тупмалли**


| | |
|---|---|
| Ум сăмах | 3 |
| 1. Чăваш чĕлхи программи | 5 |
| 2. Фонетика тишкерĕвĕн йĕрки | 11 |
| 3. Сăмах тытăмĕн тишкерĕвĕн йĕрки | 13 |
| 4. Морфологи тишкерĕвĕн йĕрки | 14 |
| 5. Синтаксис тишкерĕвĕн йĕрки | 17 |
| 6. Усă курмалли литература | 23 |

## Ум сăмах

Чăваш чĕлхипе тытмалли экзаменăн программине Федерацин патшалăх вĕренӳ стандартне тĕпе хурса хатĕрленĕ. Программа чăваш чĕлхин никĕсне хывакан ыйтусенчен килĕшӳллĕн йĕркеленсе тăрать.

Чăваш чĕлхипе тытмалли экзаменра тăван чĕлхене пĕлнине пур енчен те тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслев форми – тест ыйтăвĕсем çине тĕрĕс хурав парасси. Ыйтусене шкул программисене тĕпе хурса йĕркеленĕ. Абитуриентăн вăтам шкулта чĕлхепе V-IX классенче мĕн вĕреннине тепĕр хут тимлĕн пăхса тухмалла, аса илме тĕрлĕ йышши чĕлхе тишкерĕвĕ туса пăхмалла.

Программăн содержанийĕ çакнашкал: малтан чăваш чĕлхи çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарнин, лексикăпа фонетика, графикăпа орфографи, сăмах пулăвĕпе морфологи, синтаксис, пунктуаци, чĕлхе тата пуплев ыйтăвĕсене палăртнă, унтан тĕрлĕ тишкерĕвĕн йĕркисемпе тĕслĕхĕсене панă. Программа вĕçĕнче экзамена хатĕрленме пулăшакан литература списокне панă. «Тăван чĕлхепе» экзамен тытакан çак *социаллă культура* хăнăхăвĕсене йĕркелеме пĕлмелле:

- тăван чĕлхен разделĕсене, унта кĕрекен ыйтусене аван пĕлмелле;
- вĕренӳре, калаçура тăван чĕлхепе пĕлсе усă курма вĕренмелле;
- харпăр хăй калаçăвне тĕрĕс йĕркелеме вĕрентмелле;
- çырнă ĕçе ăнлантарса пама пĕлмелле;
- кĕнекесемпе, тĕрлĕ йышши словарьсемпе пĕлсе усă курма пĕлмелле.

Тăван чĕлхене ăша хывма çак *вĕренӳ* меслечĕсемпе усă курма пĕлмелле:

- чĕлхе пулăмĕсене ăнланса илме вĕрентмелле;
- ăнланăва пĕлсе усă курма пĕлмелле;
- тăван чĕлхене ытти чĕлхесемпе танлаштарса вĕренме тăрăшмалла;
- вĕренекен чĕлхене лайăх пĕлмелле;
- тăван чĕлхе ытти чĕлхесем хушшинче мĕнле вырăн йышăннине палăртмалла.

Вĕренекенсене *воспитани* енчен те пĕлӳ пама тăрăшмалла:

- тĕнче çине ырă кăмăл-туйăмпа пăхма вĕрентмелле;

- тăван чĕлхене, çав чĕлхепе калаçакан халăхăн культурине хисеплеме вĕрентес пулать;

- тăван чĕлхе хутшăну хатĕрĕ пулнине кăтартмалла.

Абитуриентăн ĕçĕ-хĕлĕнче шырав ĕçĕ те пысăк вырăн йышăнмалла:

- пĕлӳ хăнăхăвĕсене шыравра тупма вĕрентмелле;

- чĕлхе, ăнкарулăх шайне тĕрĕслеме пĕлмелле;

- тăван чĕлхепе хутшăнăва, малашнехи ăс-хакăла ӳстермелли ĕç-хĕле аталантармалла.

Экзамена ăнăçлă тытас тесен, вĕренекенĕн программăра палăртнă кашни разделти ыйтусене пăхса тухса тĕплĕн хатĕрленмелле.

Программăна пирĕн уйрăма вĕренме кĕрес текен мал ĕмĕтлĕ, тăван чĕлхене юратакан, унăн иксĕлми пуянлăхне туйса тăракан хастар чĕреллĕ чăваш каччипе хĕрне экзамена хатĕрленме пулăшас тĕллевпе кăларнă. Программа нумай енчен усăллă пуласса шанса тăратпăр.

# 1. ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ПРОГРАММИ

## 1.1. Чăваш çырулăхĕн аталанăвĕпе хальхи сăн-сăпачĕ

Кивĕ çырулăх (1872 çулчченхи), унăн хăш-пĕр палăкĕсем, тĕн кĕнекисем, словарьсем, вĕренӳ кĕнекисемĕ

И.Я. Яковлев – çĕнĕ çырулăхăн никĕсне хываканĕ. И.Я. Яковлев литература чĕлхин никĕсне хывни.

Чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçисем: Н.И.Ашмарин, Тимухха Хĕветĕрĕ (Ф.Т. Тимофеев), Т.М. Матвеев, В.Г. Егоров, М.Р. Федотов, С.П. Горский.

## 1.2. Лексика

Сăмах пĕлтерĕшĕ. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем. Синонимсем. Антонимсем. Омонимсем.

Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем).

Ютран кĕнĕ е йышăнакан сăмахсем.

Кивелнĕ сăмахсемпе çĕнĕ сăмахсем.

Диалект сăмахĕсем.

Тиркевлĕ сăмахсем, киревсĕр сăмахсем.

Ютран йышăннă (е йышăнакан) сăмахсем.

Фразеологизмсем (уйрăлми пĕрлешӳри сăмахсем).

## 1.3. Фонетика. Графикăпа орфографи

I. Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (хытă тата çемçе уçă сасăсем).

Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм).

Ударени (пусăм). Чăваш сăмахĕсенчи ударени. Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи ударени.

## 1.4. Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ

### Орфографи

I. Сăмах тымарĕ, аффикссем. Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем.

Мăшăр сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси.

Хутлă сăмахсем, вĕсен тытăмĕ, тĕрĕс çырасси.

## 1.5. Морфологипе орфографи

### Чĕлхери сăмахсен ушкăнĕсем (пуплев пайĕсем)

Морфологи мĕн ҫинчен вĕрентни. Чĕлхери сăмахсен ушкăнĕсем (пуплев пайĕсем).

Чăваш чĕлхинчи пуплев пайĕсен уйрăмлăхĕсем, вĕсен пуплеври вырăнĕнчен килни.

Тулли пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем, япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, местоимени, глагол, наречи, евĕрлев сăмахĕ.

Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем, хыҫсăмах, союз, татăк.

Междомети.

## 1.6. Япала ячĕсем

Япала ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем.

Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем.

Япала ячĕсен хисепĕсем – пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп.

Япала ячĕсен пулăвĕ.

Япала ячĕсен вĕҫленĕвĕ.

Камăнлăха палăртмалли мелсем. Камăнлăх форми.

## 1.7. Паллă ячĕсем

I. Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхĕсем.

## 1.8. Хисеп ячĕсем

I. Хисеп ячĕсен пĕтĕмĕшле паллисем, пĕлтерĕшĕ, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем.

Тулли тата вак хисеп ячĕсем. Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем, шут хисепĕсем, пĕтĕмлетӳ хисепĕсем, вĕсен паллăрах уйрăмлăхĕсемпе пуплеври вырăнĕ.

Шут хисепĕсен тулли тата кĕске формисем.

## 1.9. Местоименисем

I. Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем.

Местоимени ушкăнĕсем (пĕтĕмĕшле паллаштарасси).

Местоименисен вĕçленĕвĕ.

## 1.10. Глагол

### Глаголăн сăпатлă формисем

I. Глагол пĕлтерĕшĕ, унăн тулашри паллисем.

Глагол наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни.

Кăтарту наклоненийĕ тата унăн вăхăчĕсем, хальхи вăхăт, иртнĕ вăхăт, пулас вăхăт.

Хушу наклоненийĕ. Хушу наклоненин формисене тĕрĕс çырасси.

Ĕмĕт наклоненийĕ. Ĕмĕт наклоненин формисене тĕрĕс  çырасси.

Килĕшӳ наклоненийĕ, унăн пĕлтерĕшĕ, сăпатланăвĕ. Унăн формисене тĕрĕс çырасси *(кайччăр, килччĕр).*

## 1.11. Глаголăн сăпатсăр формисем

Сăпатсăр формăсен ушкăнĕсем, вĕсене сăпатлисенчен уйăракан паллăсем.

### Причасти

I. Причасти çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарни. Причастин паллăрах формисем, хальхи причасти, иртнĕ причасти, пулас причасти, пулмалли причасти; вĕсен уйрăмлăхĕсем.

### Деепричасти

I. Деепричасти пĕлтерĕшĕ, унăн уйрăмлăхĕсем.

### Инфинитив

I. Инфинитив формисем, *-ма(-ме)* тата *-машкăн (-мешкĕн)* аффикслисем. Вĕсен пуплеври вырăнĕ.

## 1.12. Наречи

I. Наречин пĕлтерĕшĕ, наречисене уйăрмалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ.

Наречисен танлаштару форми.

## 1.13. Евĕрлев сăмахĕсем

I. Евӗрлев сӑмахӗсен пӗлтерӗшӗ, пуплеври вырӑнӗ.

### 1.14. Хыҫсӑмахсем

I. Хыҫсӑмахсен пӗлтерӗшӗпе уйрӑмлӑхӗсем.

### 1.15. Союзсем

I. Союзсен пӗлтерӗшӗпе пуплеври вырӑнӗ. Сыпӑнуллӑ тата пӑхӑнуллӑ союзсем.

### 1.16. Татӑксем

I. Татӑксен пӗлтерӗшӗ, уйрӑмлӑхӗсем.

### 1.17. Междометисем

I. Междометисен ытти пуплев пайӗсем хушшинчи вырӑнӗ.

## 1.18. СИНТАКСИСПА ПУНКТУАЦИ

Синтаксис – чӗлхе наукин сӑмахсенчен пуплев мӗнлерех йӗркеленни ҫинчен вӗрентекен пайӗ.

Пунктуаци – пуплеври пӗлтерӗшлӗ сыпӑксене ҫырура еплерех уйӑрмалли ҫинчен калакан правилӑсен пуххи.

### 1.19. Предложени тата сӑмах майлашӑвӗ

I. Сӑмах майлашӑвӗ, унӑн тытӑмӗ, уйрӑмлӑхӗсем. Ансӑр тата анлӑ сӑмах майлашӑвӗсем. Шухӑш тӗшши, ӑна палӑртмалли мелсем.

Предложени, унӑн членӗсем. Предложени пӗр сӑмахран тата сӑмах майлашӑвӗнчен пулни.

## 1.20. ХУТСӐР ПРЕДЛОЖЕНИ

### Хутсӑр предложени тӗсӗсем

I. Калуллӑ, ыйтуллӑ, хистевлӗ предложенисем. Кӑшкӑруллӑ предложенисем.

### 1.21. Предложенин тӗп членӗсем

I. Подлежащи. Вӑл тӗрлӗ пуплев пайӗнчи сӑмахсенчен пулни.

Сказуемӑй. Сказуемӑй вырӑнӗнче ҫӳрекен сӑмахсем, глаголӑн сӑпатлӑ тата сӑпатсӑр формисем, ытти сӑмахсем.

### 1.22. Предложенин кӗҫӗн членӗсем

I. Определени, унăн пĕлтерĕшĕсем. Определени выранĕнче çӳрекен сăмахсем.

Дополнени.

Обстоятельство, унăн пĕлтерĕшĕсем. Обстоятельствăсене дополненисенчен уйăрасси.

## 1.23. ПĔР ЙЫШШИ ЧЛЕНЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

I. Пĕр йышши членсем – подлежащисем, сказуемăйсем, кĕçĕн членсем. Пĕр йышши членсем союзсăр тата союзсемпе çыхăнни.

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем. Вĕсем пур чухне чарăну палли лартасси.

## 1.24. Обращени. Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем

I. Ансăр тата анлă обращенисем. Обращенисен предложенири вырăнĕ. Чарăну паллисемпе уйăрасси.

Кӳртĕм сăмахсемпе (е предложенисемпе) вырăнлă усă курма хăнăхтарасси.

## 1.25. ПĔР СОСТАВЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

I. Подлежащисĕр предложенисем. Сказуемăйсăр предложенисем.

## 1.26. ТУЛЛИ МАР ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

I. Тулли мар предложенисем, вĕсене пĕр составлисенчен уйăракан паллăсем.

## 1.27. Предложенири уйрăмлатакан сăмахсем

I. Предложенири сăмахсене интонаципе уйрăмлатнин тĕллевĕ.

Интонаципе уйрăмлатакан сăмахсене çырура чарăну паллипе уйăрасси.

## 1.28. Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем

I. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем, вĕсенче тӳрĕ пуплевпе автор сăмахĕсем епле вырнаçни. Диалог. Тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенире тата диалогра чарăну паллисем лартасси.

Цитата, ăна чарăну паллисемпе уйăрасси.

## 1.29. ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

I. Хутлă предложени çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарасси (хутлă предложение хутсăрринчен уйăрмалли тĕп паллă). Хутлă предложенири хутсăр

предложенисене çыхăнтаракан мелсем, союзсем, союзла сăмахсем, хыççăмахсем, аффикссем, хутсăр предложенисен вырăнĕ-йĕрки, интонаци пĕрлĕхĕ. Хутлă предложенисен тĕсĕсем, сыпăнуллă хутлисем, пăхăнуллă хутлисем, çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем.

### 1.30. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем

I. Çыхăну паллисĕр хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисен çыхăнăвĕ, пĕлтерĕшĕ.

Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси.

### 1.31. Сыпăнуллă хутлă предложенисем

I. Сыпăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисене çыхăнтаракан союзсем. Чарăну паллисем лартасси.

### 1.32. Пăхăнуллă хутлă предложенисем

I. Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем, тĕп предложени, пăхăнуллă предложени. Вĕсене çыхăнтаракан мелсем, союзсем, союзла сăмахсем, хыççăмахсем, аффикссем, вырăнĕ-йĕрки.

### 1.33. Чĕлхе тата пуплев

Чĕлхе тата пуплев. Чĕлхепе пуплев хушшинчи тачă çыхăну.

Чĕлхепе пуплев хушшинчи уйрăмлăхсем.

Пуплев тата хутшăну.

Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ.

Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем.

Стильсен хутшăну вырăнĕпе тĕллевĕ хушшинчи килĕшĕвĕ. Ĕçлĕ стиль. Хушу. Пĕлтерӳ. Ыйту. Çирĕплетӳ (расписка). Шану хучĕ. Резюме.

## 2. ЧĔЛХЕ ТИШКЕРĔВĔН ЙĔРКИ

## 2.1 ФОНЕТИКА ТИШКЕРĔВĔН ЙĔРКИ

1. Сăмах çемçе, хытă е хутăш пулнине кăтартмалла.
2. Сăмаха сыпăксем çине уйăрса тухмалла.

3. Пусăм вырăнне кăтартмалла.

4. Сăмахра миçе сасă тата миçе сас палли пуррине палăртмалла.

5. Уçă сасăсемпе хупă сасăсене йĕркипе каласа тухмалла, вĕсем мĕнле сасăсем пулнине кăтартмалла.

6. Сас паллисен ячĕсене йĕркипе кăтартса тухмалла.

7. Сăмахри сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр пек е тан маррине палăртса хавармалла.

## 2.2 Фонетика тишкерĕвĕн тĕслĕхĕ

Тĕслĕх: <u>*Пĕлӳрéн*</u> *хаклă пурлăх çук.*

*Пĕлӳрен* – çемçе сăмах;

Ку сăмах сыпăксем çине çапла пайланать: *пĕ-лӳ-рéн;*

*Пĕлӳрен* сăмахра пусăм юлашки сыпăк çине ӳкет;

*Пĕлӳрен* [п’ьл’ур’эн’] – 7 сасă, 7 сас палли;

п – [п’] – хупă сасă, янăравсăр, çемçе, кĕске;

ĕ – [ь] – çемçе уçă сасă, тутасăр;

л – [л’] – хупă сасă, ялан янăравлă, çемçе, кĕске;

ӳ – [у] – çемçе уçă сасă, тутапа;

р – [р’] – хупă сасă, ялан янăравлă, çемçе, кĕске;

е – [э] – çемçе уçă сасă, тутасăр, пусăмлă;

н – [н’] – хупă сасă, ялан янăравлă, çемçе, кĕске.

Сăмахра çак сас паллисене çырмалла, «пă», «ĕ», «лă», «ӳ», «рă», «йэ», «нă».

*Пĕлӳрен* сăмахра [п’] сасă çемçелĕхĕ [ь] сасăран килет, [л’] сасă çемçелĕхĕ – [у] сасăран, [р’] сасă çемçелĕхĕ – [э] сасăран; сăмах вĕçĕнче «н» çыратпăр, анчах [н’] илтĕнет; унăн çемçелĕхĕ те умĕнче тăракан [э] сасăран килет.

Тĕслĕх, *Сана ирпе час-час* <u>*курattăм*</u>

*Шап-шур çеçкеллĕ садăрта (Шавли).*

*Курattăм* – хытă сăмах;

Ку сăмах сыпăксем çине çапла пайланать, *ку-рат-тăм;*

*Курattăм* сăмахра пусăм иккĕмĕш сыпăк çине ӳкет;

*курattăм* [курат,ăм] – 7 сасă, 8 сас палли;

к - [к] – хупă сасă, янăравсăр, хытă, кĕске;

у – [у] – хытă уçă сасă, тутапа;

р – [р] – хупă сасă, ялан янăравлă, хытă, кĕске;

а – [а] – хытă уçă сасă, тутасăр, пусăмлă;

т – [т,] – хупă сасă, янăравсăр, хытă, вăрăм;

ă – [ъ] – хытă уçă сасă, тутасăр;

м – [м] – хупă сасă, ялан янăравлă, хытă, кĕске.

Сăмахра çак сас паллисене çырмалла, «кă», «у», «рă», «а», икĕ «тă», «ă», «мă».

*Кураттăм* сăмахра вăрăм, хытă [т] калатпăр, çырасса икĕ «т» çыратпăр.

Тĕслĕх, *Мĕнле <u>пурăнмаллине</u>, пурнăç тути-масине*

*Çавăн чухне вара тин кăшт тишкерсе тухатпăр*

*(А.Кибеч).*

*Пурăнмаллине* – хутăш сăмах;

Ку сăмах сыпăксем çине çапла пайланать, *пу-рăн-мал-ли-не;*

*Пурăнмаллине* сăмахра пусăм юлашки сыпăк çине ӳкет:

*пурăнмаллине [пурънмал':ин'э]* - 11 сасă, 12 сас палли;

п – [п] – хупă сасă, янăравсăр, хытă, кĕске;

у – [у] – хытă уçă сасă, тутапа;

р - [р] – хупă сасă, ялан янăравлă, хытă, кĕске;

ă - [ъ] – хытă уçă сасă, тутасăр;

н – [н] – хупă сасă, ялан янăравлă, хытă, кĕске;

м – [м] - хупă сасă, ялан янăравлă, хытă, кĕске;

а – [а] – хытă уçă сасă, тутасăр;

л – [л'] – хупă сасă, ялан янăрвлă, çемçе, вăрăм;

и – [и] – çемçе уçă сасă, тутасăр;

н – [н'] – хупă сасă, ялан янăравлă, çемçе, кĕске;

э – [э] – çемçе уçă сасă, тутасăр, пусăмлă.

Сăмахра çак сас паллисене çырмалла, «пă», «у», «рă», «ă», «нă», «мă», «а», икĕ «лă», «и», «нă», «йэ».

*Пурăнмаллине* сăмахра вăрăм, çемçе [л’] калатпăр, çырасса икĕ «л» çыратпăр, [л’] сасă çемçелĕхĕ [и] сасăран килет; юлашки сыпăкра «н» çыратпăр, анчах [н’] илтĕнет; унăн çемçелĕхĕ [э] сасăран килет.

## 2.3 СĂМАХ ТЫТĂМĔН ТИШКЕРĔВĔ

1. Сăмах хăш пуплев пайне кĕнине кăтартмалла.
2. Сăмах тĕпне аялтан йĕр туртса палăртмалла.
3. Сăмах тымарне е тымарĕсене кăтартмалла.
4. Сăмах тăвакан аффикса ∧ кăтартмалла.
5. Сăмаха улăштаракан аффикссене ⊓ кăтартмалла.
6. Форма тăвакан аффикссене ⌠⌡ кăтартмалла.
7. Кашни тымарăн е аффиксăн тепĕр вариантне туллин кăтартмалла, кашнинпех тĕслĕх тупса скобкăра çырса памалла.

Тĕслĕх: *Шухăшларам-шухăшларăм та сана чĕнсе пăхас терĕм.*

*Шухăшларăм* – глагол

*шухăш* – тымар

ла – сăм. тăв аф., гл. тăв. аф., (ĕçле)

р – сăм. ул. аф., иртнĕ в. аф., (пĕлчĕ, пĕлтĕм)

ăм – сăм. ул. аф., I сăп. аф., (ĕçлерĕм)

*сана* – местоимени

*сан* – тымар, (эсĕ)

а – сăм. ул. аф., Пару п. аф., (пире)

*чĕнсе* – глагол

*чĕн* – тымар

се – ф.т.аф., глаголăн деепр. форми, (кайса).

## 2.4 МОРФОЛОГИ ТИШКЕРĔВĔН ЙĔРКИ

### Япала ячĕ

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Пайăр е пайăр мар ят.

4. Камăнлăх форми, хăш сăпатра хисепре (пур пулсан).

5. Япала ячĕн хисепĕ.

6. Падеж.

Тĕслĕх: *Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм, Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе (Я. Ухсай).*

*Туссем* – япала ячĕ, сăмах тĕпĕ – тус, пĕрремĕшле сăмах, пайăр мар ят, нумайлă хисепре, тĕп падежра.

Кĕскен: *Туссем* – я.я., с.т. – тус, пĕр.с., п.м.ят, нум.хис., Тĕп п.

**Паллă ячĕ**

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Вăйлă форма (пур пулсан).

4. Падеж (пур пулсан).

5. Танлаштару, палăрту, мĕнлелĕх формăсем (пур пулсан), хисепĕ, падежĕ.

Тĕслĕх: *Сана, ватăскере, пурте хисеплесе çул параççĕ, ăшă куçпа ăсатаççĕ (Арт.).*

*Ватăскере* – п.я., с.т. – ватă, пĕр.с. пал.ф., пĕр.х., Пару п.

**Хисеп ячĕ**

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Пĕлтерĕш ушкăнĕ.

4. Сăпачĕ (пур пулсан).

5. Хисепĕ (пур пулсан).

6. Падежĕ (пур пулсан).

Тĕслĕх: *Салановпа Капитонова иккĕшне те президиума суйларĕç (Арт.).*

*Иккĕшне* – х.я., с.т. – иккĕ, пĕр.с., шут х.я., 3 сăп., пĕр.х., Пару п.

## Местоимени

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Хăш ушкăна кĕрет.

4. Сăпат. Хисеп. Падеж. Виçе (пур пулсан).

Тĕслĕх: *<u>Кам</u> ытларах тăрăшать, çав ытларах тырă тăвать (Тукт.).*

*Кам* – мест., с.т. – кам, пĕр.с., ыйту мест., пĕр.х., Тĕп п.

## Глагол

1. Глагол тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Аспект, çирĕплетӳ, хирĕçлев, пулаюлăх, пулаюсăрлăх.

4. Сăпатлă формăра пулсан, наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп.

5. Сăпатсăр формăра пулсан,

инфинитив;

причасти, вăхăт, сăпат, хисеп, падеж (пур пулсан);

деепричасти.

Тĕслĕх: *<u>Пасарнă</u> йывăç леш енчен,*

*Кусса тухать хĕвел çатми.*

*<u>Шăнса</u> пăрланнă кĕленче*

*<u>Ылтăнланать</u> ытарайми (П.Хусанкай).*

*Пасарнă* – глагол, с.т. – пасар, ик.с., çирĕпл. асп., иртнĕ причасти;

*Шăнса* – глагол, с.т. – шăн, пĕр. с., çирĕпл. асп., дееприч.;

*Ылтăнланать* – глагол, с. т. – ылтăнлан, ик. с., çирĕпл. асп., кăт.н., хальхи в., 3 с., пĕр. х.

## Наречи

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Хăш ушкăна кĕрет.

4. Танлаштару форми (пур пулсан).

Тĕслĕх: *Ялан ăспа çӳресен, ялти ватă ятламасть (Ват.сăм.).*

*Ялан* – наречи, с.т. – ялан, пĕр.с., вăхăт нар.

**Евĕрлев сăмахĕ**

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Пĕлтерĕшĕ.

4. Мĕнле морфологи паллисем пур (енчен те, вĕсем пур пулсан).

Тĕслĕх: *Меек! Меек! Кăшкăраççĕ качакисем, такисем (Шелепи).*

*Меек* – ев.с., с.т. – меек, пĕр.с., выльăх-чĕрлĕх макăрнине палăртни.

**Хыççăмах**

1. Сăмах тĕпĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Хăй умĕнчи сăмаха хăш падежра тытса тăрать.

Тĕслĕх: *Çĕмĕрт çеçки çурăлать,*

*Вăрман витĕр курăнать (Юрă).*

*Витĕр* – хыççăмах, с.т. – витĕр, пĕр.с., хăй умĕнчи сăмаха Тĕп пад. тытса тăрать.

**Союз**

1. Сыпăнуллă е пăхăнуллă союз.

2. Пĕлтерĕшĕ тăрăх хăш ушкăна кĕрет, а) сыпăнтару, уйăру е хирĕçлев; ă) пирке, тĕллев, услови, тĕллевпе услови, килĕшӳ.

Тĕслĕх: *Эпĕ куртăм тĕнчере*

*Хуласем чылай, анчах*

*Шупашкарăм чĕрере*

*Пулчĕ манăн яланах (Я.Ухсай).*

*Анчах* – сыпăнуллă союз, хирĕçлеве пĕлтерет.

**Татăк**

1. Пĕлтерĕш тăрăх хăш ушкăна кĕрет.

2. Улшӑнакан е улшӑнман татӑк.

Тӗслӗх: *Ӗненӗн-ши? Сӑрт чухлӗ пур вӑл, тетӗп (Крылов).*

*Ши* – татӑк, ыйту татӑкӗ, улшӑнман татӑк.

**Междомети**

1. Пӗлтерӗш ушкӑнӗ.

Тӗслӗх: *Пурӑнӑҫсем, ах, аван*

*Аслӑ Силпи ялӗнче (К.Иванов).*

*Ах* – междомети, туйӑм междометийӗ (савӑннине пӗлтерет).

## 3.4 СИНТАКСИС ТИШКЕРӖВӖН ЙӖРКИ

**Сӑмах майлашӑвне тишкерессИ**

1. Сӑмах майлашӑвӗ анлӑ-и, ансӑр-и?

2. Тӗп компонентне кура хӑш ушкӑна кӗрет?

3. Тӗп тата пӑхӑнакан компонентсем.

4. Компонентсем миҫе сӑмахлӑ?

5. Ҫыхӑну мелӗ мӗн?

6. Сӑмах майлашӑвне хӑш предложенирен илнӗ?

Тӗслӗх: *Киле таврӑнас / вӑхӑт* – анлӑ ят сӑмах майлашӑвӗ. Тӗп компоненчӗ – *вӑхӑт,* пӗр сӑмахлӑ; пӑхӑнаканни – *киле таврӑнас,* темиҫе сӑмахлӑ, ҫыхӑну мелӗсем, 1) компонентсен вырӑнӗ-йӗрки; 2) пулас причастин аффиксӗ *-ас* (вӑл пӑхӑнакан компонент ҫумӗнче). Пӑхӑнакан компонент япалан паллине ӗҫ тӑрӑх кӑтартать.

Схема:




Тӗслӗхе ҫак предложенирен илнӗ, *Киле таврӑнас вӑхӑт ҫитрӗ (Уяр).*

**Хутсӑр предложение тишкерессИ**

1. Предложени хутсӑр пулнине каламалла.

2. Тӗп членсене кӑтартмалла.

3. Тĕп членсене кура предложени мĕнле, пĕр тĕп членлă-и, икĕ тĕп членлă-и? Пĕр тĕп членлă пулсан – хăш ушкăна кĕрет, подлежащисĕр-и, сказуемăйсăр-и? Подлежащисĕрри пулсан – хăшĕ, паллă мар сăпатлă-и, сăпатсăр-и? Сказуемăйсăр пулсан – ят предложени пулнине каламалла.

4. Анлă-и, ансăр-и?

5. Тулли-и, тулли мар-и?

6. Тĕллевĕ енчен мĕнле, ыйтуллă-и, ыйтусăр-и?

7. Пурлă-и, çуклă-и?

8. Эмоци енчен мĕнле, эмоциллĕ-и, эмоцисĕр-и?

9. Чарăну палли лартассипе çыхăннă мĕнле уйрăмлăхсем пур?

Тĕслĕх: *Çуркуннеччĕ. Атăл хĕррине те кайкаллаттăмăр. (Талв.)*

<u>*Çуркуннеччĕ.*</u>

Ку предложени хутсăр (подлежащи – *çуркуннеччĕ,* сказуемăй – кирлĕ мар). Пĕр составлă, ят, ансăр, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

*Атăл хĕррине те* <u>*кайкалаттăмăр.*</u>

Ку предложени хутсăр (подлежащи – *эпир,* ăна сиктерсе хăварнă; сказуемăй – *кайкалаттăмăр*). Ик составлă, анлă, тулли мар, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

**Хутсăр предложение членсем тăрăх пăхса тухасси**

1. Ятарласа тишкермен пулсан предложение кĕске характеристика памалла, миçе тĕп членлă, пĕр тĕп членлă пулсан, хăш ушкăна кĕрет, анлă-и, ансăр-и; тулли-и, тулли мар-и.

2. Тĕп членсем, вĕсем хăш пуплев пайне кĕни (мĕнле сăмах майлашăвĕнчен пулни).

3. Синтагмăсен черетне, хăш сăмах туртăмĕнче тăнине шута илсе кĕçĕн члена ыйту памалла. Ыйтăва хуравласа тишкерӳри сăмаха каламалла, вăл мĕнле член, хăш пуплев пайĕ (мĕнле сăмах майлашăвĕ) пулнине пĕлтермелле.

Тĕслĕх, *Çĕр çинче каллех май уйăхĕ хуçаланчĕ. (Н.Петровская).*

Подлежащи – *уйăхĕ,* япала ячĕ; сказуемăй – *хуçаланчĕ,* глаголăн сăпатлă форми.

Мĕнле (мĕн) уйăхĕ? - *май* – определени, япала ячĕ.

Хăçан хуçаланчĕ? - *каллех* – вăхăт обстоятельстви, наречи.

Ăçта хуçаланчĕ? - *çинче* – вырăн обстоятельстви, япала ячĕ.

Мĕн çинче? - *çĕр* – определени, япала ячĕ.

## Хутлă предложенисене тишкересси

Панă тĕслĕх мĕнле хутлă предложени. Çыхăну паллисĕр-и? Çыхăну паллиллĕ-и?

## Çыхăну паллисĕр хутлă предложени

1. Хутлă предложенин пайĕсем.

2. Пайсем пĕрешкел тытăмлă-и е расна тытăмлă? Мĕншĕн?

3. Шухăш енчен пайсем хушшинче мĕнле çыхăну пур?

4. Панă тĕслĕхре хутсăр предложенисем виççĕ е ытларах пулсан – кашни пая хăйне уйрăммăн, хутсăр предложени таран вакласа ăнлантармалла. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенин мĕнле те пулин пайĕ хутсăр предложени пулсан – ăна уйрăммăн çӳрекен хутсăр предложенин тишкерӳ йĕркипе пăхса тухмалла.

5. Чарăну паллипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

Тĕслĕх: *Макçăм арăмне чышса ярасшăн пулчĕ*[1] *– Çтаппан ирĕк памарĕ*[2] *( Н. Мр.).*

Ку тĕслĕх – çыхăну паллисĕр хутлă предложении. Вăл икĕ хутсăр предложенирен тăрать, 1-мĕшĕ – *Макçăм арăмне чышса ярасшăн пулчĕ* (подлежащи – *Макçăм;* сказуемăй – *чышса ярасшăн пулчĕ*); 2-мĕшĕ – *Çтаппан ирĕк памарĕ.* (подлежащи – *Çтаппан,* сказуемăй – *памарĕ*).

Пайсем расна тытăмлă, мĕншĕн тесен пĕрремĕш пайĕ пурлă, иккĕмĕшĕ – çуклă.

Хутсăр предложенисем пĕлтерĕш енчен пĕр-пĕринпе условипе следстви çыхăнăвĕнче тăраççĕ, çавăнпа вĕсен хушшине тире лартнă.

1-мĕш хутсăр предложени икĕ составлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр. 2-мĕш хутсăр предложени икĕ составлă, анлă, тулли, ыйтусăр, çуклă эмоцисĕр.

Схема: I [ 1 ] – [ 2 ] II

**Çыхăну паллиллĕ хутлă предложени**

Сыпăнуллă хутлă-и, пăхăнуллă хутлă-и?

**Сыпăнуллă хутлă предложени**

1. Хутлă предложенин пайĕсем.

2. Пайсем мĕнле союзпа çыхăнаççĕ.

3. Союза кура предложени хăш ушкăна кĕрет, сыпăнтаракан союзлă-и, уйăракан союзлă-и, хирĕçлекен союзлă-и?

4. Пайсем хушшинче шухăш енчен мĕнле çыхăну пур.

5. Панă тĕслĕхре хутсăр предложенисем виççĕ е ытларах пулсан – кашни пая, хăйне уйăммăн, хутсăр предложени таран вакласа ăнлантармалла. Мĕнле те пулин пай хутсăр предложени пулсан – ăна уйрăм çӳрекен хутсăр предложенин тишкерӳ йĕркипе пăхса тухмалла.

6. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

Тĕслĕх: *Салампи чылайччен вăрман еннелле çаврăнса пăхкаларĕ*[1]*, анчах çамрăк мăшăр тек уялла ярăнса тухмарĕ*[2] *(А.Арт.).*

Ку предложени сыпăнуллă хутлă. Вăл икĕ предложенирен тăрать, 1-мĕшĕ – *Салампи чылайччен вăрман еннелле çаврăнса пăхкаларĕ;* 2-мĕшĕ – *çамрăк мăшăр тек уялла ярăнса тухмарĕ.* Вĕсем хирĕçлекен *анчах* союзпа çыхăнаççĕ. Запятой союз умĕн лартнă.

1-мĕш предложени хутсăр (подлежащи – *Салампи;* сказуемăй – *пăхкаларĕ*), икĕ составлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

2-мĕш предложени хутсăр (подлежащи – *мăшăр;* сказуемăй – *тухмарĕ*), икĕ составлă, анлă, ыйтусăр, çуклă, эмоцисĕр. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

Схема, I 1 ,анчах 2 II

**Пăхăнуллă хутлă предложени**

1. Тĕп тата пăхăнуллă пайсем.

2. Пăхăнуллă пай вырăнĕ.

3. Пăхăнуллă пай тĕп пая мĕн таран ăнлантарать, пĕтĕмĕшлĕн е уйрăм сăмахĕсене çеç-и?

4. Çыхăну мелĕ мĕн?

5. Пăхăнуллă пайăн пĕлтерĕшĕ мĕнле?

6. Пăхăнуллă пай хăш ушкăна кĕрет (хутсăр предложенин мĕнле членĕпе тӳр килет).

7. Пăхăнуллă пая мĕнле ыйту памалла.

8. Виççĕ е ытларах предложенирен тăракан тĕслĕхĕн кашни пайне хутсăр предложени таран вакламалла, анчах хутсăр предложенисене уйрăм çӳрекен предложени пек туллин тишкермелле мар – тĕп членсене кăтартсан çитет.

9. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

Тĕслĕх: *Эпир тухса каяс умĕн*[1] *Анна инке мана хăй патне сĕтел умне пыма чĕнчĕ*[2] *(Аслан).*

Панă тĕслĕх – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ – 2-мĕш предложени, пăхăнулли – 1-мĕш предложени. Пăхăнуллă пай тĕп предложени умĕн тăрать, тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарса унпа *умĕн* хыççăмахпа çыхăнать, ĕç вăхăтне пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, ыйтăвĕ – *хăçан Анна инке мана сĕтел умне пыма чĕнчĕ.*

Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *эпир;* сказуемăй – *тухса каяс*). Тĕп пай – хутсăр (подлежащийĕ – *инке;* сказуемăйĕ – *чĕнчĕ*).

Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

Схема, 1 2

**Урăх çын сăмахлă предложенисене тишкересси**

1. Предложени тӳрĕ пуплевлĕ-и, тӳрĕ мар пуплевлĕ-и?

2. Урăх çын сăмахĕсем тата автор сăмахĕсем. Вĕсен тытăмĕ.

3. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

Тĕслĕх, *«Кам килчĕ.[1]» - ыйтрĕ Салампи Пĕчĕк Нинăран[2] (Арт.).*

Панă тĕслĕх – тӳрĕ пуплевлĕ предложени.

Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕн тăрать, пĕр-пĕринпе *ыйтрĕ* глаголпа çыхăнаççĕ.

Пĕрремĕш предложени – хутсăр предложени (подлежащи – *кам,* сказуемăй – *килчĕ*). Иккĕмĕш предложени – хутсăр (подлежащи – *Салампи,* сказуемăй – *ыйтрĕ*).

Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕн тăнă. Тӳрĕ пуплев хыççăн ыйту палли лартнă. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен пуçласа çыраççĕ.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

### Тĕп литература


1. Сергеев Л.П. Чувашский язык: учеб. издание / Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, В.И. Котлеев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2012. – 430 с.

2. Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования. [Электронный ресурс] URL: http://standart.edu.ru/Catalog.aspx?Catalogld=2626

3. Яковлев П.Я. Чăваш фонетики: http://www.twirpx.com/file/1603112/


### Хушма литература


1. Андреев В.В., Иванова А.М., Харитонова С.В. Современный чувашский язык. Практикум. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. – 124 с.

2. Андреев И.А. Чăваш пунктуацийĕ: Тӳрлетсе çĕнетнĕ кăларăм. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. – 175 с.

3. Андреев И.А. Чувашский язык. Практический курс. – Чебоксары: Чуваш. кн.изд-во, 2011. – 302 с.

4. Андреев И.А., Виноградов Ю.М. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ: Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993.

5. Андреев И.А., Сергеев Л.П., Петров Н.П. Чăваш чĕлхи. Синтаксис. VII-VIII классем валли. – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 2000. – 287 с.

6. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи. 6-мĕш класс валли / И.А. Андреев, Р.И. Гурьева, Н.А. Краснова, Е.А. Мулюкова. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2015. – 255 с.

7. Васильева Е.Ф. Словарь синонимов чувашского языка. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2014. – 207 с.

8. Васильева Е.Ф. Хальхи чăваш чĕлхи. Лексикологи. Практикум. – Шупашкар: Чăв.ун-чĕн изд-ви, 1994. – 88 с.

9. Виноградов Ю.М. Хăнăхтару пуххи. 8-9 классем валли. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн изд-ви, 2008. – 163 с.

10. Димитриев В.И., Егорова В.А. Чăваш чĕлхи: VI-VII классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2000. – 301 с.

11. Виноградов Ю.М. Чăваш чĕлхи. 10-11-мĕш классем: вĕренӳ кĕнеки / Ю.М.Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. – 272 с. (Родной (чувашский) язык. 10–11 классы)

12. Дмитриева Э.Ф. Диктант тексчĕсен пуххи. V-IX классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1994. – 175 с.

13. Егорова Л.В. Ачасен пуплевне аталантармалли хăнăхтарусем. – Шупашкар, 2012. – 119 с.

14. Иванова А.М. Современный чувашский язык. Грамматический разбор. – Чебоксары, 2008. – 136 с.

15. Иванова А.М. Современный чувашский язык. Фонетика. Фонология. Графика и орфография. – Чебоксары, 2010. – 84 с.

16. Иванова А.М. Современный чувашский язык. Синтаксис. Сложное предлоцениеĕ – Чебоксары, 2009. – 84 с.

17. Майков Е.А., Михайлова З.Л., Кузьмина Г.В. Чăваш чĕлхи. V-IX классенче вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслемелли тест пуххи. – Шупашкар, 1999. – 37 с.

18. Михайлова З.П., Михайлов В.М. Сочиненисем. – Шупашкар, 2000. – 96 с.

19. Сергеев В.И. Хальхи чăваш чĕлхи, Лексика тата лексикологи. Семантика тата семасиологи. – Шупашкар, 2010. – 56 с.

20. Сергеев Л.П., Чернов М.Ф. Чăваш чĕлхи. Фонетикăпа орфографи, Методика кăтартăвĕсем. – Шупашкар, Чăваш ун-чĕ, 2009. – 28 с.

21. Сергеев Л.П. Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи, Вĕренӳ кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш ун-чĕ, 2008. – 176 с.

22. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи, справочник. – Шупашкар: Руссика, 2004. – 88 с.

23. Сергеев Л.П. Чăваш сăмахĕ: VII-IX классенче чăваш чĕлхине анлă вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1994. – 158 с.

24. Сергеев Л.П. Грамматика вăййисем: 5 – 9 классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2008. – 110 с.

25. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. Хăнăхтарусем. Вĕреннине тĕрĕслемелли ыйтусемпе ĕҫсем. Литература. Методика кăтартăвĕсем. – Шупашкар, 2013. – 53 с.

26. Современный чувашский литературный язык. Синтаксис. Пунктуация, метод. указания / А.С.Егорова, Э.П. Казакова. – Чебоксары: Чув.ун-т, 2008. –32 с.

27. Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9-мĕш классĕсем валли / И.А. Андреев, Г.Н. Семенова, Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ инст-чĕн изд-во центрĕ, 2013. – 63 с.

28. Хальхи чăваш чĕлхи программи. Хатĕрленӳ уйрăмĕнче вĕренекенсем валли / Хатĕрл. Андреев В.В. – Шупашкар, Чăваш ун-чĕ, 2009. –

16 с.

29. Хальхи чăваш чĕлхи. Синтаксис. Практика занятийĕсен ĕçĕсемпе методика кăтартăвĕсем / Хатĕрл. Виноградов Ю.М. – Шупашкар, 2010. – 39 с.

30. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ. Вĕренӳ пособийĕ – Шупашкар, 2011. – 96 с.

31. Чĕлхе терминĕсен ăнлантаруллă словарĕ / Хатĕрл. Сергеев Л.П., Данилова М.Г. – Шупашкар, 2009. – 41 с.

32. Чăваш чĕлхи программи. Чăваш шкулĕнчи V-IX классем валли / Хатĕрл. Андреев И.А. – Шупашкар, 2010. – 46 с.

33. Чăваш чĕлхи: аслă шкулсенчи чăваш уйрăмĕсемпе факультечĕсене вĕренме кĕрекенсем валли хатĕрленĕ чăваш чĕлхипе меслет кăтартăвĕсен программи программи / Хатĕрл. Л.В. Власова.. – Çтерлĕ, 2008. – 56 с.

34. Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. – 223 с.

**Дисциплинăна алла илмелли информацине телекоммуникаци сечĕ «Интернет» ресурсăн пуххи (малалла «Интернет» сеть)**

1. Андреев И.А. Чувашский язык. Практический курс: http://www.twirpx.com/file/1681715/

2. Дегтярев Г.А. Изучаем чувашский язык: http://www.twirpx.com/file/1327289/

3. Образовательные ресурсы Интернета [http://www.alleng.ru].

4. Чувашское книжное издательство: http://www.chuvbook.ru/index.php/katalog

5. Чувашский народный сайт http://chuvash.org/

6. Чувашская энциклопедия http://cv.wikipedia.org

7. Электронные словари http://samahsar.chuvash.org/